## **Вăрманта**

– Пĕлтер, вăрманăм, мĕн тăвас?
Ыр тусăм, евитле!
– ...итле ...ле.
– Ухмахсене ухмах теме хăю çитертĕм çеç...
– ...тертĕм çеç ...тĕм çеç.
– Айăпсăрне хӳтĕлеме хăю çитертĕм çеç...
– ...тертĕм çеç ...тĕм çеç.
– Нивушлĕ пур пăтранчăкпа
тивет пĕрле юхмах?
– ...ухмах ...ах.
– Нивушлĕ çак уяр-инкек
татах та типĕтет?
– ...пĕтет ...тет.
– Апла кала, мĕн тумалла?
Туссем – юман кĕреш.
– ...кĕреш ...кĕреш.
*1974*

*Эртиван, С. Вăрманта : [сăвă] / С. Эртиван // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 495.*